Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Светлая (Петрова) Елена Владимировна**

**Книга: Яшлăхпа ватлăх**

# Басня: Портфельлĕ Ашак

Пушмакĕпе шаклаттарса, эй, шак та шак
Мăн çулпала утса пырать Ашак.
Курах каять хайхи: умра портфель выртать,
Çап-çут тăхи хĕвелпеле йăл-йăл йăлтăртатать.

«О-хо?! − ик хăлхине вылянтарать Ашак.−
Портфель! Ăçтан эс пĕлнĕ манăн шухăша?
Килсем часрах кунта! Алра портфель пулсан
Çын ăслăн, тăнлăн, сумлăн курăннă ялан.
Халь ĕнтĕ эп те ятлă пулăп санпалан!

Портфель! Эс ӳстеретĕн шанчăка!» −
Мăнаçланать Ашак. Умра ак − Качака.
Вăл тĕлĕнет Ашак сумлăхĕнчен −
Ара, портфель чăнах та сум кӳрет иккен.
«Ыйтам-ха пулăшу портфельлĕ Ашакран,−
Тет Качака, − хăтарĕ тен йывăрлăхран?»
− Хисеплĕ…Хм-м…
Ашак Ашакович…. Ĕнсе
Ку яхăнта ытла та ларчĕ хĕсĕнсе:
Вунă путек вĕт ман… Апачĕ-çимĕçĕ сахал,
Пӳрт-çӳчĕ сивĕ… Çитеймест вăй-хал
Эс халĕ ятлă çын ĕнтĕ, Ашак,
Тен, шеллĕн кӳршӳне, тен, пулăшăн кăштах?

− Чим… Портфеле уçам-ха, − тет Ашак.
Уçать хайхи, анчах портфелĕ пуш-пушах:
Ни хăпарту унта, ни кăтарту…
Çакна пăхса тăруçăн Качака
Тӳрех каларĕ уççăн Ашака:
− Çынна канаш пама çитеймесен мехел
Алла мĕн-ма тытатпăр-ши портфель?

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.